Муркаш район хаҫачӗ

# Ҫӗнтерӳ ялавӗ

1944 ҫулхи майӑн 5-мӗшӗнчепе тухать

42 (7682) № ✻ Юн кун, 2009 ҫулхи майӑн (ҫу) 27-мӗшӗ ✻ Хакӗ ирӗклӗ

Паян – Пӗтӗм Раҫҫейри библиотекӑсен кунӗ

## Пурнӑҫпа тан пыраҫҫӗ



Майӑн 27-мӗшӗнче Раҫҫейре библиотекӑсен кунне паллӑ тӑваҫҫӗ. Библиотекӑсем вӗсем халӑхӑн астӑвӑм пуянлӑхӗ, авалхи ҫыру материалӗсенчен пуҫласа электронлӑ ресурссем таран информацисен тӗп ҫӑл куҫӗ пулса тӑраҫҫӗ.

Хальхи вӑхӑтра ҫынсен ыйтӑвӗсене тивӗҫтерме библиотекӑсенче мӗн кирли пӗтӗмпех пур. Библиотекӑсене компьютер тата офис техникипе тивӗҫтернӗ. Пурте интернетпа усӑ курма пултараҫҫӗ. 2008 ҫулта районти библиотекӑсен 304964 тенкӗлӗх 4543 экземпляр кӗнекесемпе тата дисксемпе пуянланнӑ. Районти библиотекӑсен пӗтӗмӗшле фончӗ 329599 экземпляр шутланать, вӑл шутран пичет документӗсем 325146, электронлӑ изданисем 3983, аудиовизуаллӑ изданисем 470. Ял тӑрӑхӗсем хушшинчи Муркашри тӗп библиотека 60 тӗрлӗ хаҫат-журнал ҫырӑнса илет, ялсенчи библиотекӑсем – 15-18.

Библиотекӑсем культурӑпа массӑллӑ мероприятисем ирттерессинчен те айкинче юлмаҫҫӗ. Вӗсем сывӑ пурнӑҫ йӗркине пропагандӑлаҫҫӗ, кӗнекесем вулассин пӗлтерӗшне уҫса параҫҫӗ, ҫамрӑксене тӑван таврапӑх ыйтӑвӗсемпе интереслентерме хистеҫҫӗ.

(Вӗҫӗ 4-мӗш стр.).

**Сӑн ӳкерчӗкре: ҫамрӑк библиотекарьсем.**

**ХИСЕПЛӖ БИБЛИОТЕКАРЬСЕМ ТАТА ВУЛАКАНСЕМ!**

Сире Пӗтӗм Раҫҫейри библиотекӑсен кунӗ ячӗпе чун-чӗререн саламлатӑп. Эсир питӗ пархатарлӑ ӗҫ тӑватӑр. Кӗнеке ҫыншӑн чи ҫывӑх тус пулнине, вӑл ӑс-хакӑл тӗлӗшӗнчен аталанма, пысӑк тавракурӑмлӑ, культурӑллӑ ҫын пулма вӗрентнине халӑх патне илсе ҫитерме тӑрӑшатӑр. Ачасемпе ҫитӗннисем кӗнеке енне туртӑнччӑр тесе хӑвӑртан килнине йӑлтах тӑватӑр.

Юлашки ҫулсенче районти библиотекӑсем хӑйсен сӑнсӑнпатне палӑрмаллах улӑштарчӗҫ. Вӗсем паракан пулӑшусен шучӗ те нумайланчӗ, пахалӑхӗ те лайӑхланчӗ. Унти аудио-, видеотехника, компьютерсем паян ҫынсене информаци анлӑшне чӗнеҫҫӗ. Вӗсенче кирек хӑҫан та интернета тухма пулать.

Хисеплӗ библиотекарьсем! Эсир малашне те хӑвӑрӑн тивӗҫӗре чун-чӗре хушнӑ пек пурнӑҫласса, сирӗн пултарулӑх шайӗ ӳссех пырасса, библиотекӑсемпе вулакансен хушшинчи ҫыхӑну ҫирӗпленессе шанатӑп. Пурсӑра та сирӗн сывлӑх, ӑнӑҫу, телей сунатӑп.

**Район пуҫлӑхӗ Ю.А. ИВАНОВ.**

Район пурнӑҫӗ британец куҫӗпе

## «Эсир ҫӳллӗ шайра ӗҫлеме, пурӑнма тӑрӑшни мана килӗшет»

Ӗнер, ҫу уйӑхӗн 26-мӗшӗнче, ӗҫлӗ сул ҫӳревпе Муркаш енре Чӑваш Республикин Министрсен Кабинечӗн Председателӗ Сергей Гапликов тата Раҫҫейпе Британин суту-илӳ палатин ӗҫ тӑвакан директорӗ Стивен Диэл **(сӑн ӳкерчӗкре вӗсем сулахайра тата сылтӑмра)** пулса курчӗҫ.

Пысӑк хӑнасене малтанах Москакассинче вырнаҫнӑ «Сеспель» Шупашкар предприятийӗ» хупӑ акционерлӑ обществӑра ЧР Промышленность министрӗ Ю. Волошин, предприяти директорӗн коммерци ыйтӑвӗсемпе ӗҫлекен ҫумӗ А. Иванов кӗтсе илчӗҫ. Кун хыҫҫӑн вӗсем аякран килнисене предприятири Европа шайӗнчи пахалӑхлӑ ӗҫсемпе, хатӗр продукципе паллаштарчӗҫ. Сӑмах май, предприяти кӑҫалхи пӗрремӗш кварталта 25 миллион ытла тенкӗлӗх продукци кӑларнӑ. Пӗтӗм тӗнчери экономика кризисӗпе тупӑшсах предприяти тупӑшлӑ ӗҫленине Стивен Диэл килӗшӳллӗ палӑртрӗ. Предприятире 300 ҫынна яхӑн ӗҫлени те кунта йывӑрлӑхсем умӗнче пуҫ усманни пирки калать.

«Сеспель» Шупашкар предприятийӗ» хупӑ акционерлӑ общество хыҫҫӑн хӑнасем Муркашри физкультурӑпа спорт комплексӗнче пулса курчӗҫ. Кунта вӗсене район пуҫлӑхӗ Ю. Иванов, Муркаш ял тӑрӑхӗн пуҫлӑхӗ Н. Никитин, физкультурӑпа спорт комплексӗн директорӗ А. Куликов кӗтсе илчӗҫ.

– Ял ачисене сывлӑха ҫирӗплетсе спортра малалла аталанма ҫакнашкал условисем туса панӑшӑн сире пысӑк тав. Муркаш урамӗсенчи илемлӗ чечексем вара ку тӑрӑхра сывӑ пурнӑҫ йӗркине тытакансемпе тирпейлӗхе мала хуракансем пурӑнни пирки калать. Ку питӗ килӗшӳллӗ пулӑм! Эсир ҫӳллӗ шайра ӗҫлеме, пурӑнма тӑрӑшни мана килӗшет, – терӗ физкультурӑпа спорт комплексӗнчен ҫӗкленӳллӗ кӑмӑлпа тухнӑ май Стивен Диэл британец.

**А. БЕЛОВ сӑн ӳкерчӗкӗ.**



Районти ӗҫпе тивӗҫтерекен центрта

## Ӗҫлекен валли ӗҫ пултӑр

Ҫынсене ӗҫпе тивӗҫтерессипе эпир халӗ икӗ программӑпа ӗҫлетпӗр. Кусем вӗсем 2007–2010 ҫулсем валли хатӗрленӗ ведомство программи тата 2009 ҫулхи республика программи. Ведомство программине пурнӑҫа кӗртме района 2009 ҫул валли 4 миллион та 587 пин тенкӗ, республика программипе 12 миллион тенкӗ ытла куҫарса панӑ.

Ӗҫсӗррисен списокӗнче паянхи куна 262 ҫын шутланать. Ӗҫсӗрлӗх шайӗ 1,2 процент. 2009 ҫулхи февралӗн 1-мӗшӗ тӗлне вӑл 183 ҫынпа (0,8 процент), майӑн 1-мӗшӗ тӗлне 298 ҫынпа (1,35 процент) танлашрӗ. 2009 ҫулхи январӗн 1-мӗшӗнчи кӑтартупа танлаштарсан вара ӗҫсӗррисен шучӗ 118 ҫын чухлӗ е 2,2 хут ӳсрӗ. Ӗҫсӗррисенчен хӑйсен ирӗкӗпе ӗҫрен тухнисем 46 процент, ӗҫ вырӑнӗ пӗтнипе ӗҫсӗр юлнисем 7,7 процент, хӗрарӑмсем 58 процент, декретлӑ отпускрисем 12 процент, аслӑ пӗлӳ илнисем 13 процент, вӑтам професси пӗлӗвӗ илнисем 15 процент, пуҫламӑш професси пӗлӗвӗ илнисем 26 процент, пӗтӗмӗшле вӑтам пӗлӳ илнисем 35 процент, пӗтӗмӗшле пӗлӳ илнисем 10 процент.

Кӑҫал январь уйӑхӗнчен тытӑнса 354 ҫынна ӗҫе вырнаҫтарма май килчӗ. Вӑл шутран ялапӑх ӗҫе – 62 ҫынна. Ӗҫсӗррисене 149 ҫынна ӗҫ тупса панӑ. Ӗҫе вырнаҫтарнисенчен хӗрарӑмсем 187 ҫын е 53 процент, 14-18 ҫулсенчи ҫамрӑксем 184 ҫын е 52 процент.

Ҫынсене обществӑлла ӗҫ вырӑнӗсем тупса парассипе ӗҫлетпӗр. Ку енӗпе 317 ӗҫ вырӑнӗ йӗркеленӗ, 259 ҫынна ӗҫе янӑ, вӑл шутран ӗҫсӗррисене 251 ҫынна.

(Вӗҫӗ 2-мӗш стр.).

Конференци

## Парти малашлӑха пӑхать

«Единая Россия» партин Тӗп Канашӗн Президиумӗн йышӑнӑвӗпе килӗшӳллӗн ҫӗршывра иртнӗ суйлавпа отчет кампанийӗнче партин юлашки икӗ ҫулти ӗҫ-хӗлне тишкерсе пӗтӗмлетнӗ. Ака-ҫу уйӑхӗсенче партин Чӑваш Енри пуҫламӑш тата вырӑнти уйрӑмӗсенчи пухусенче – Муркаш тата Сӗрпӳ районӗсенчи политканашсен секретарӗ пулма администраци пуҫлӑхӗсене Ю. Ивановпа Ю. Николаева ҫирӗплетнӗ.

Ҫу уйӑхӗн 21-мӗшӗнче партин Чӑваш регион уйрӑмӗн черетсӗр 15-мӗш конференцийӗ ӗҫленӗ. Унта хутшӑннисем регион политканашӗпе тӗрӗслев-ревизи комиссийӗн отчечӗсене сӳтсе явнӑ. Регион политканаш секретарӗ М. Михайловский хӑйӗн докладӗнче иртнӗ икӗ ҫулта парти членӗсен йышӗ икӗ хут ӳснине, 30 пин ҫынна ҫитнине палӑртнӑ. 2008 ҫулхи ҫӗртме уйӑхӗнче Аграри партийӗн 3,5 пин членӗ «единороссен» ретне тӑнӑ. Халӑхпа тытакан ҫыхӑнӑва анлӑлатма ҫӗршыв правительствин Председателӗн В. Путинӑн пӗлтӗрхи ҫурла уйӑхӗнче Шупашкарта усӑллӑ йышӑну пӳлӗмӗ витӗмлӗ пулӑшнӑ. Малтанхи ҫултах 4 пин ытла ҫын хӑйӗн ыйтӑвӗпе пынӑ, вӗсене пурне те тулли хурав панӑ.

Форум ҫитес тапхӑрти тӗп тӗллев 2010 ҫулхи (Чӑваш Республикин вырӑнти хӑй тытӑмлӑх органӗсен депутачӗсен) тата 2011 ҫулхи (Чӑваш Республикин Патшалӑх Канашӗн тата Раҫҫей Федерацийӗн Патшалӑх Думин) суйлав кампанийӗсене тӗплӗн хатӗрленесси пулнине палӑртнӑ.

Район администрацийӗнче

## Нумай ҫул ӗҫленӗшӗн

***Район администрацийӗн пуҫлӑхӗн 2009 ҫулхи апрелӗн 10-мӗшӗнчи йышӑнӑвӗпе район администрацийӗн Хисеп грамотипе наградӑланӑ:***

***Ачасен хушма вӗрентӗвне аталантарассине тӳпе хывнӑшӑн тата обществӑлла ӗҫе активлӑ хутшӑннӑшӑн***

**Галина Михайловна АНИСОВАНА**, Муркашри ача-пӑча искусство шкулӗн ертӳҫине.

***Строительствӑра нумай ҫул тӳрӗ кӑмӑлпа ӗҫленӗшӗн тата обществӑлла ӗҫе активлӑ хутшӑннӑшӑн***

**Татьяна Александровна ТИМОФЕЕВАНА**, «Моргаушская» МСО штукатур-малярне.

***Ҫамрӑк ӑрӑва вӗрентсе воспитани парас ӗҫри ӳсӗмсемшӗн тата нумай ҫул тухӑҫлӑ ӗҫленӗшӗн***

**Александр Ефимович РОМАНОВА**, Муркаш шкулӗнчи музыка учительне.

Юбилей

## Саламлатпӑр



Шаптак Муркаш ялӗнче пурӑнакан ӗҫчен те ырӑ кӑмӑллӑ мӑшӑра, юратнӑ аттене, кукаҫине, хисеплӗ тӑванӑмӑра – **Николай Филиппович СКВОРЦОВА** 70 ҫул тултарнӑ ятпа чунчӗререн саламлатпӑр. Эпир санпа мухтанатпӑр, пуриншӗн те тав тӑватпӑр, ырлӑх-сывлӑх, иксӗлми телей сунатпӑр. Татах та нумай ҫул эсӗ пире савӑнтарса пурӑн.

**Саламлаканӗсем: юратнӑ мӑшӑрӗ, ывӑлӗпе хӗрӗ, кӗрӳшӗ, мӑнукӗ, тӑхлачи тата йышлӑ тӑванӗсем, кӳршисем.**

## Иккӗмӗш ҫур ҫул валли ҫырӑнтараҫҫӗ

**Хаклӑ вулакансем! Районти «Ҫӗнтерӳ ялавӗ» хаҫата иккӗмӗш ҫур ҫулта илсе тӑма унчченхи хакпах ҫырӑнтараҫҫӗ. Ултӑ уйӑха ҫырӑнмалли хак – 191 тенкӗ те 70 пус.**

**Райхаҫат редакцийӗ.**